Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* N 144 (4713) *1998 çулхи декабрь (раштав) уйăхĕн 19-мĕшĕ, шăматкун* *Палăртнă хакпа.*

# Декабрĕн 22-мĕшĕ - Энергетиксен кунĕ

***Ӳкерчĕкре:* Нурлатри подстанцири тухса çӳрекен оперативлă бригада электромонтерĕ В.А.Колотилин.**



НРРЭС коллективĕн ĕçĕ-хĕлĕпе ыйтăвĕсене халаллано материала 2-мĕш страницăра вулăр.

## Пĕтĕмпе йĕркелĕхрен пуçланать

**(Районти семинар-канашлуран)**

Район ертӳçисем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе канашлăва ку е тепĕр хуçалăхра ĕç йĕркин меслечĕсемпе мелĕсене практикăра кăтартсаırттерме ыйтăнни çинчен хаçатра пĕлтернĕччĕ ĕнтĕ. Малта пыраканнисенче кăна мар, вăтаммисенче те, кая юлса пыраканнисенче те. Тĕллев пĕрре - отрасльте йĕрке тумалла, обществăлла выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне çирĕп ӳстермелле тата çакна май сĕтпе аш туса илессине чылай ӳстермелле. Хулапа район администрацийĕн пуçлăхĕ Ф.С.Сибагатуллин канашлу пуçламăшĕнче палăртнă тăрăх, хамăрăн ялсенче тавар туса илекенсен продукцине ыйтнă вăхăтра производство калăпăшĕсене ӳстермелли тата финанс енчен йывăр тапхăрта хуçалăхсен лару-тăрăвне мĕнле те пулин çăмăллатас тесе, çав шутра ĕç укçине тӳлес ыйтăва татса парассине те, ăна тупăшлă вырнаçтармалли майсемпе усă курмалла. Ĕç укçине илес пулсан, вăл пурнăçланă ĕçпе килĕшсе тăмалла, ĕçе тухнăшăн кăна тӳленĕ вăхăт иртрĕ. Апла халь ĕлĕкрех анлă сарăлнă тата тупăш илме пулăшакан хуçалăх расчечĕ патне таврăнмалла. Тĕрĕс ĕнтĕ, халь техникăпа, минераллă удобренисемпе тата ытти кирлĕ материалсемпе тивĕçтернипе танлаштарсан, ял хуçалăхĕнче продукци туса илессин калăпăшĕсем чакни палăрать, пур факторсене шута илсен вара отрасль эффективлăхĕ чылай çӳлĕ шайра пулмалла. Кунта шутласа пăхмасăр кĕртнĕ рынок çĕнĕлĕхĕсен витĕмĕсĕр пуçне, тĕп факторсенчен пĕрне - çынна тимлĕх уйăрманнине шута илмелле, тесе палăртрĕ Ф.С.Сибагатуллин. Производствăна хутшăнакан кашни çын кам-тăр хушнине ним шутламасăр пурнăçлакан пулмалла мар, хăйĕн тивĕçĕсене тĕплĕн шухăшласа тумалла, хуçалăха экономика енчен усăллă илсе пыма тата продукци хăйхаклăхне чакарма тăрăшмалла. Çак çулйĕрсенчен пĕрремĕш требовани - кашни ĕç вырăнĕнче тĕрĕс йĕрке тăвасси. Кунта калаçу технологипе кун йĕркине çирĕп пăхăнасси çинчен çеç мар, чи малтан ансат йĕрке тăвасси çинчен пырать. Сăмахран, фермăсенчи санитари кунĕсене илер - вĕсем çинчен чылайăшĕ тахçанах маннă. Шăпах ĕç культуринчен дисциплина пуçланать те ĕнтĕ. Çакна хуçалăхсен ертӳçисем, семинара хутшăннă ытти специалистсем Синдряков ячĕпе хисепленекен хуçалăхра тата "Нурлат" агрофирмăн автоматкомплексĕнче пулса курса ĕненчĕç. Сысна тата măйракаллă шултра выльăх фермисенчен кашнинче, пур майсемпе усă курса, йĕрке тунă. Çакна хушма тăкаксем кăларса е унччен пулман мероприятисем ирттерсе туманнине те шута илмелле. Эрнере сĕт сунин тата сутнин итогĕсене пĕтĕмлетнĕ вăхăтра администраци пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ Ю.В.Терентьев асăннă мерăсене ку хуçалăхра çирĕп пăхăнаççĕ. Çав шутра селекципе ăратлăх ĕçĕ те кунта тĕп тимлĕхре, хуçалăх ĕçченĕсем сăвакан ĕнесен кĕтĕвне кашни çул 25 процентран кая мар çĕнетеççĕ; пĕтĕ пушмак пăрусене ятарлă рационпа апатлантараççĕ; пăрусене сивĕ меслетпе усрассине те кунта хăш-пĕр хуçалăхсенчи пек манман. Юлашки тĕлĕшпе администраци пуçлăхĕ пăрусене сивĕ меслетпе усрассине хута ярас тесен çамрăк выльăхсем вилнĕшĕн айăплисенчен укçа-тенкĕ шыраса илмелли çинчен аса илтерчĕ. Синдряков ячĕпе хисепленекен хуçалăхра выльăхсене кăкармасăр усрассине хута янă, сысна ĕрчетес ĕçре тăкаксене хирĕçле механизмпа ăнăçлă усă кураççĕ. Эпир çак хуçалăхра çурасем илес тĕлĕшпе лайăх ĕçлени çинчен часчасах çыратпăр, халь те çакна курса шантăмăр: вĕсем каялла чакмаççĕ. Сысна ĕрчетекен отрасль анлă аталанассинче хуçалăх агрофирма составне кĕни, ăна мĕнпур енчен пулăшни, çав шутра фермăсене реконструкцилени те пысăк вырăн йышăннине палăртмалла. Çакна кунта ăнланаççĕ, тăрăшса ĕçлеççĕ. Çавăнпа пĕрлех сысна ĕрчетекен отрасльте ӳсĕмсем тăвас тесен агрофирмăра та, ытти хуçалăхсенче те нумай ĕçлемелле-ха.

Семинар-канашлăва хутшăннисем Синдряков ячĕпе хисепленекен хуçалăхпа комплекслă паллашрĕç теме пулать. Техпарксенче пулса, вĕсем техникăна хирти çурхи ĕçсем тĕлне хатĕрленесси мĕнле пынипе, çаплах вăрлăхсемпе минераллă удобренисем мĕнле упраннипе паллашрĕç. Удобренисене илсен, вĕсем лайăх упранаççĕ, вăрлăхсене калибрлассине вара вĕçне çитермен. Çаклатса ĕçлемелли хатĕрсене юсасси те аван пырать. Çапах та тĕп юсав мастерскойĕнчи йĕркесĕрлĕхшĕн синдряковецсен хăнасем умĕнче хĕрелме тиврĕ.

Çакăн пек семинарсене тĕрлĕ хуçалăхсенче маларах вăрах хатĕрленмесĕр ирттересси çинчен çӳлерех каларăмăр ĕнтĕ. Вĕсен пĕлтерĕшĕ шăпах кулленхи ĕçе кăтартассинче вĕт. Йĕркелĕхе илсен вара, ку кашни ĕçченшĕн норма пулмалла, çакă, чи малтан, вĕсене хăйсене кирлĕ. Йĕрке пулсан ĕç те ăнать.

Канашлура тата ытти кирлĕ ыйтусене те пăхса тухрĕç, çакăн çинчен калаçу малашне те пулĕ-ха.

**Р.ГИЛЬМУТДИНОВ.**

## Хаçатсăр пурăнма май çук

Кăçал çитес çулăн пĕрремĕш çур çулне çырăнтарасси йывăр пурнăçланни çинчен эпир пĕрре мар çырнăччĕ ĕнтĕ. Кризиса кĕрсе ӳкнĕ çынсем пĕтĕм шанăçне çухатнă: сайра-хутра паракан сахал ĕç укçипе мĕнле усă курмаллине пĕлмеççĕ, те апат-çимĕç туянмалла, те ачисене тумлантармалла, те коммуналлă услугăсемшĕн тӳлемелле. Çитменнине тата хаçат-журнал редакцийĕсен вĕсен изданийĕсене çеç çырăнса илме чĕнекен рекламисене кашни кун кураттăр. Укçа пулсан эпир суйласа илме пултарăттăмăр та-ха. Çакна май эпир район хаçачĕн яланхи вулаканĕсене чĕререн тав тăватпăр. Район хаçатне нурлатсем 8 пине яхăн çырăннă ĕнтĕ, çакă пире питĕ савăнтарать, малашлăха шанăç парать. Çапла, шăпах шанăç, хаçат вулакансем пулсан кăна пурăнма пултарать вĕт, эсир çакна питĕ лайăх пĕлетĕр. Çырăнтару кампанийĕн юлашки кунĕсенче эсир çырăнтару пункчĕсене пырасса шанатпăр. Почта ĕçченĕсем те ĕç укçи шучĕпе çырăнтарма килĕшнĕ, ваттисене вара - пенси шучĕпе.

Районта тухса тăракан хаçат хăйĕн вулаканĕсене çĕршывра, тĕнчере пулса иртекен лару-тăру çинчен пĕлтерсех тăрать пулин те, республикăри хаçат-журналсене çырăнсан та лайăх пулмалла. Ку тĕлĕшпе, вулакансем активлă пулнипе, пирĕн район та кайрисен шутĕнче мар - районта 28 пине яхăн экземпляр хаçат-журнал çырăннă, почта уйрăмĕсенче ĕçлекенсем вĕсене тав тăваççĕ. Шел пулин те, республикăра тухса тăракан хаçат-журнала çырăнасси иртнĕ çулхинчен начартарах пырать. Тутар тата чăваш чĕлхисемпе тухакан изданисен шăпи вара пире уйрăмах пăшăрхантарать. Республика пурнăçĕ çинчен тăван чĕлхепе вулас тесен "Ватаным Татарстан", "Шахри Казан", "Сувар" хаçатсене çырăнсан лайăхрах пулмалла. Ку хальхи вăхăтра тăван чĕлхепе литературине, культурăна аталантарассине сыхласа хăварма, унăн авторитетне ӳстерме те кирлĕ. Нацишĕн, чĕлхешĕн хамăрăн тăрăшмалла, ют çын пирĕншĕн тăрăшмĕ.

Çырăнтару кампанийĕ вĕçлениччен шутлă кунсем юлчĕç. Эсир çĕнĕ çула хăвăр юратнă хаçатпа кĕтсе илес тетĕр пулсан, пĕр тăхтаса тăмасăр почта уйрăмне васкăр.

**Килĕшĕр, хаçатсăр, ăстăн апачĕсĕр, пирĕн пурнăç питĕ чухăн пулнă пулĕччĕ. Сыхăну уйрăмĕсем пурте шăматкун графикпа ĕçлеççĕ (14.00 сехетчен); тĕп сыхăну узелĕ шăматкун графикпа, вырсарникун - 14.00 сехетчен. Çырăнтару пункчĕсене васкăр. Çĕнĕ çулта çĕнĕ хыпарсене пĕлсе тăрăр. Лайăххисем кăна пулма Турă пулăштăр.**

## Ĕне сумалли тепĕр зал

Выльăхсене кăкармасăр усрасси çине куçассипе, ĕнесене ятарласа оборудованиленĕ залсенче сăвасси не йĕркелессипе çыхăннă ĕçсене йывăрлăхсене пăхмасăр малалла пурнăçлаççĕ. Çак кунсенче те "Надежда" агрофирмăн фермисенчен пĕринче сумалли зал ĕçлеме тытăннă. Чи малтан вара сумалли зала Пĕчĕк Хăмăшлă ялĕнче ятарлă вагончикра оборудованиленĕ, Вăтам Хăмăшлăри кооперативри çĕннине вара çĕнĕлле йĕркеленĕ, пысăклатнă. Витене хăйсемех тунă, сăвакан аппаратсене вара çак ĕçĕн районти "монополисчĕ" "Камиль-агро" фирма вырнаçтарнă. Сумалли залра 15 ĕнене пĕр вăхăтра сума мĕнпур условисем тунă: кунта ăшă, сăвакан хатĕрсене, аппаратсене çума май пур. Çаплах выльăхсене темиçе вырăна уйăрни, пысăк кĕтӳ йĕркелени усăллă. Селекципе ăратлăх ĕçĕсене йĕркеллĕ пурнăçлассишĕн те малтанах тăрăшаççĕ: кашни ĕнене хăш кĕтӳрен - сăвакан, пăрахтарнă е пăрулана хыççăнхи - пулнине кура палла тунă.

Çапла вара, халь районти 15 хуçалăхра ĕне сумалли 22 зал ĕçлет. Урăхла каласан, сăвакан ĕнесенчен çуррине яхăн ятарлă залсенче сăваççĕ. Тата çакăн пек 10 зала туса пĕтернĕпе пĕрех, çапла вара, çĕнĕлĕх мĕнле сарăлнине курма йывăр мар. Çак технологи выльăх продуктивлăхне усă панин тĕслĕхĕсем нумай. Çакă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсен, фермăсен ĕçне те çăмăллатать, фермăсенче ĕçлекенсем çитменнипе çыхăннă ыйтусене те татса пама пулăшать.

# Энергетиксем потребительсемшĕн ĕçлеççĕ

Чистайри электросетьсен НРРЭС коллективĕ кăткăс задачăсем - районти ялсене, халăх хуçалăх объекчĕсене, хулара пурăнакансене, нефтяниксене электроэнергипе тивĕçтерессине пурнăçлать. Ăна Нурлатри 110/35/10 кВ. хăватлă подстанци, Мамăкри, Чулпанти, Киклĕри, Вăтам Хăмăшлăри, Элметри, Тĕкĕрмелĕнчи 35/10 кВ. хăватлă подстанцисем, ялсенчи 400 ытла комплектлă трансформатор подстанцийĕсем пăхăнса тăраççĕ, çав вăхăтрах 10/04 кВ. хăватлă 1400 километр ытла сывлăш линийĕсене тивĕçтереççĕ. Çак ĕçе 57 çынран тăракан коллектив пурнăçлать. Вăл Чистайри электричество сечĕсене пăхăнса тăрать, 60-мĕш çулсен варринче йĕркеленĕренпе структура улшăнăвĕсем пулман.

Вăхăт мĕнле улшăнсан та электроэнерги пĕлтерĕшĕ чакмасть. Энергетиксен ыйтăвĕсем çинчен каласан вара, вĕсене çулсерен сахалрах тимлĕх уйăраççĕ. Ку пирĕн шухăш мар, энергетиксем хăйсем пĕтĕмлетӳ туни. Электричество пайлакан сетьсен расходпа приход кĕнекинче çакăн пек цифрăсем пур: ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне районти хуçалăхсем 3 миллион та 344 пин тенкĕ парăма кĕнĕ, предприятисемпе организацисем - 5 миллион та 455 пин тенкĕ, "Татнефть" акционер обществи - 9 миллион та 610 пин тенкĕ. Кун çумне тата ялти потребительсен 926 пин тенкĕ парăмне, промышленноçăн маррисен 124 пин тенкине хушмалла.

Электроэнергие "кивçен" панипе энергетиксен хăйсен лару-тăрăвĕ кăткăсланать: парăмсем ӳсеççĕ, май уйăхĕнчен пех предприятире ĕç укçи параймаççĕ. Чи хăрушши вара - вĕсен хуçалăхĕ кивелет. Çапла, чылай ялта пысăк вольтлă линисене 30 çул улăштарман ĕнтĕ, подстанцисем те тахçанхисемех. Нурлатри 110/35/10 кВ. хăватлă подстанцие те 1968 çултах тунă. Техникăпа оборудовани енчен кивелнĕскере, ăна хулана энергипе тивĕçтерме кунран-кун йывăртарах. Кăçал çак объектра икĕ авари пулни - чи малтан вăл кивелсе çитнин результачĕ. Каллех мĕн те пулин пулас пулсан, хулана çутă пама запас энерги çук. Чи хăрушши - çак кăткăс объекта çитес çывăх вăхăтра çĕнетесси паллă марри. Чăнах та, проектпа смета документацийĕ тахçанах хатĕр, унпа килĕшӳллĕн ăна çитес çул хута ямалла. Анчах та хальхи укçа-тенкĕ енчен йывăр вăхăтра кулленхи ĕçсене пурнăçланипех çырлахма тӳр килет. Кăçал, тĕпрен илсен, Тĕрнеçри, Ялавăрти, Октябринори комплектлă трансформатор подстанцийĕсене çĕнетнĕ. Пĕрремĕшĕнче сывлăш линине реконструциленĕ, хушма подстанци вырнаçтарнă, нагрузкăсене çĕнĕрен пайланă. Тĕкĕрмелĕнче те çавăн пек ĕçсех пурнăçланă, Нурлатран Якуркелне çити пысăк напряжениллĕ сывлăш линийĕсем туртнă. Чылай линисемпе подстанцисене юсамалла.

- Укçа - тенкĕ çителĕклĕ пулсан, пирĕн енчен çитменлĕхсем пулман пулĕччĕç, - тет НРРЭС начальникĕ В.Н.Батыршин. - Пирĕн коллектив питĕ ĕçчен, вăл Нурлатра çеç мар, ялсенчи подстанцисенче ĕçлекенсене пĕрлештерсе тăрать. Вĕсен шутĕнче оперативлă бригадăри электромонтерсем В.А. Колотилинпа О.В.Глухарев, ГАЗ-66 машина шоферĕ В.А.Синяков, шофер-электромонтĕр С.Н.Ведихов, М.В.Васячкин электромонтер тата Г.А.Глухаревапа В.Г.Никифорова, 24-25 çул диспетчер ĕçне пурнăçланăскерсем, пĕрлехи ĕç вĕсем тӳрĕ кăмăлпа вăй хунинчен, вăр-варлăхĕнчен килет. Чулпан подстанцийĕнчи И.Клявлин, Киклĕри М.Гилязевпа Б.Галиуллин, Элметри М.Галиев тракторист - электромонтерсем те хăйсен тивĕçĕсене ăнăçлă пурнăçлаççĕ, ял çыннисене электроэнергипе кăлтăксемсĕр тивĕçтерме тăрăшаççĕ.

Шел пулин те, вĕсем тăрăшни хăш чухне сая каять. Юлашки çулсенче тĕслĕ металсене вăрланă тĕслĕхсем чылайланни паллă ĕнтĕ, çак инкек чи малтан энергетиксене тивнĕ. Вăрлакансем сывлăш электролинийĕсен пралукĕсене татса антараççĕ, трансформаторсене "хывăнтараççĕ". Çапла, кăçал вĕсем Çĕнĕ Элметри çуллахи лагерĕн, Кукăркӳлпе Ялавăрти кирпĕч завочĕсен подстанцийĕсене "тасатнă", Кульбаево-Марасапа Кăчăканлăра алюмини пралукĕсем вăрланă. Çапла майпа, вăрăсем НРРЭСа çеç мар, потребительсене те сиен кӳреççĕ.

Тен, професси уявĕ умĕн энергетиксен ыйтăвĕсем çинчен калаçни выранлă та мар пулĕ, анчах та эпир вĕсем çинчен питĕ сайра аса илетпĕр: е уявра, е çутăсăр юлсан. Юлашки сайра пултăрччĕ. Çавăнпа та пире электроэнергипе тивĕçтерекен çынсен ыйтăвĕсене пĕрле татса памалла.

Уяв ячĕпе сире, хисеплĕ энергетиксем!

**С.ХАЙРУЛЛИНА.**









**Н.Азизов сăнӳкерчĕкĕсенче: диспетчер службин ĕçченĕсем Г.А.Глухаревапа В.Г.Никифорова; О.В.Глухарев электромонтер, С.Н.Ведиховпа М.Б.Галиуллин шофер-электромонтерсем.**

## Кочегарсем вĕренеççĕ

"Агропромэнерго" пĕрлешĕвĕн бази çинче хуçалăхсен выльăх-чĕрлĕх фермисен, çаплах шĕвĕ топливăпа тата кăмрăкпа хутакан шкулсен кочегарĕсем вĕреннĕ. Аттестаци евĕрлĕ икĕ кунхи вĕренӳ котельнăйсенче ĕçлекенсене хăйсен специальноçĕпе пĕлĕвне ӳстерме пулăшнă.

## ...Тĕп зоотехниксем, экономистсем

Нумаях пулмасть элеватор клубĕнче районти хуçалăхсен тĕп зоотехникĕсем, экономисчĕсем семинара пухăннă. Конкретлă сĕнӳсемпе, зоотехника учетне йĕркелесе ярассипе тата экономика тишкерĕвне хальхи шайра туса пырассипе çыхăннă тĕп ыйтусемпе ял хуçалăхĕпе апат-çимĕç управленийĕн начальникĕ Ф.М.Давлетшин тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе ĕçлекен пай начальникĕ Р.И.Сиразетдинов тухса калаçнă.

## ...Тата тĕп инженерсем

Районти "Сельхозтехника" пĕрлешĕвĕн бази çинче хуçалăхсен тĕп инженерĕсемпе те тĕплĕ калаçу иртнĕ. Канашлăва пĕрлешĕвĕн специалисчĕсемпе пĕрле "Гостехнадзор" инспекцийĕн начальникĕ Р.С.Сатдаров иртнернĕ. Тĕпрен илсен, кунта ял хуçалăх техникине юсасси мĕнле пыни çинчен калаçнă. Çак тапхăрта "Сельхозтехникăпа" пĕрле тачă çыхăну тытса ĕçлесси усăллă пулнине тĕп тимлĕх уйăрнă.



**"Татнефтепром" ОАО акционерсен черетсĕр пĕрлехи пухăвне irttерессi çинчен пĕлтерет.** Пуху декабрĕн 30-мĕшĕнче "Карабашнефть" НГДУ çуртĕнче пулать.

Пухăва хутшăнма акционерсене 8 сехетрен тытăнса 9 сехетчен регистрациleççĕ.

Пухăва хутшăнакансен хăйсемпе пĕрле паспорт пулмалла, акционерсен представителĕсен вара - пухура хутшăнма ирĕк паракан доверенность.

"Татнефтепром" ОАО акционерĕсен черетсĕр пĕрлехи пухăвĕн кун йĕрки:

1. Зузеевăри нефть промыслине уйăрнă май уйăрлнă обществăн акцийĕсен 100 процентне "Татнефтепром" ОАОна хăварса "Татнефтепром" ОАОна çĕнĕрен йĕркелесси.
2. Обществăна уйăрмалли йĕркепе условисене çирĕплетесси.
3. Уйăрмалли баланс çирĕплетесси.
4. Уйрăлакан обществăн Уставне çирĕплетесси.
5. Акционерсен пĕрлехи пухăвĕ çинчен Положени çирĕплетесси.

Пухăва ирттерес тата кун йĕркипе çыхăннă ыйтусемпе эсир директорсен советне пыма пултаратăр ("Татнефтепром" ОАО çурчĕ, Альметьевск хули, К.Цеткин урамĕ, 30), телефон: 3-46-55.

**"Татнефтепром" ОАО директорсен совечĕ.**

*"Хыпар" хыпарлать*

## ПОЭТА АСĂНСА

Нумаях пулмасть К.В.Иванов ячĕллĕ литература музейĕнче чăваш литература анинче нумай çул хушши тухăçлă ĕçленĕ чăваш халăх поэчĕ Александр Алка çуралнăранпа 85 çул çитнĕ май асăну каçĕ иртрĕ тата ăна халалланă курав уçăлчĕ. Александр Алка - пĕрремĕш писатель-салтак. Унăн пултарулăхĕ тарăн шухăшлă та нумай енлĕ. Вăл поэт, прозаик, драматург ("Шывармань", "Хамăр ялсем" либреттăсен авторĕ), куçаруçă, публицист тата литература критикĕ. Алка çырнă ĕçсене халăх яланах юратса вуланă, вулать те.

Чăваш халăх поэтне ЧР Писательсен союзĕн ертӳçи Х.Агивер, Г.Ефимов, П.Ялкир сăвăçсем, В.Бурнаевский, Ф.Андреев çыравçăсем ăшшăн аса илчĕç, пурнăçри "чĕрĕ" самантсемпе паллаштарчĕç. Çавăн пекех Асăну каçне Алка хĕрĕ - хулари 16-мĕш шкулта вырăс чĕлхипе литературине вĕрентекен Вера Александровна Ходорченко та хутшăнчĕ.

**О.СЮЗЮКИНА.**

